28.-мĕш ĕçре тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
АПРЕЛЬ
21
ШАМАТКУН
76(6827) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА
СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Партин районсенчи отчетпа суйлав пухăвĕсемпе конференцийĕсен решенийĕсене тĕплĕн пурнăçлар!

Юлашки икĕ уйăх хушшинче партин районсенчи нумай организацийĕсенче отчетпа суйлав пухăвĕсем тата конференцисем пулса иртрĕç. Вĕсене чылай çĕрте организованно та ĕçлĕн, идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çулĕ пусăмра тăрса иртернĕ. Пухусемпе конференцисенче критикăпа самокритикăна анлăн сарнă, ĕçри ситменлĕхсене тĕплĕн палăртнă, çакăвăл пирĕн парти кадрĕсем ӳснине кăтартса парать. Çав пухусемпе конференцисенче коммунистсем районри партипе хуçалăх ĕçĕшĕн, государство умĕнчи пур обязательствăсене те вăхăтра та кăтартуллăн тултарассишĕн хăйсен ответлăхне çирĕп туйса тăни куранчĕ.

Партин районри хăшпĕр организацийĕсенче партиллĕ-организацийĕ ĕçе йĕркелес енĕпе пысăк çитменлĕхсем пурринех палăртнă. Партин нумай райкомĕсем пуçламĕш парторганизацисене куллен ĕçлĕ пулăшу парса пымаççĕ. Пуçламĕш партorganизаци секретарĕсемпе семинарсем тата канашлусем йĕркеллĕ туса ирттермеççĕ. Уйрăм организацисен ĕнше лайăхлатасси çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхаççĕ, тĕп профессисемпе ĕçлекен рабочисенс, малта пыракан колхозниксемпе трактористсене партие сахал илеççĕ. Çапла, сăмахран, ВКП(б) Сĕнтĕрвăрри райкомĕ 1944 çулта партие пĕтĕмпе те 15 колхозника кăна илнĕ, партин Йĕпреç тата Çĕмĕрле райкомĕсем вара иртнĕ çулта парти ротине пĕр тракториста та илмен. Хăшпĕр районри парторганизацисенче çамрăк коммунистсене воспитани парас ĕçе çителĕксĕр йĕркеленĕ. Çавна пула, сăмахран, Улатăр, Хĕрлĕ Чутай, Тăвай районĕсенче кандидатра тăмалли стажсем иртсе кайнă кандидатсен ĕнше питĕ пысăк. Партин чылай райкомĕсем комсомол организацийĕсене çителĕксĕр ертсе пыраççĕ, комсомолăн ертсе пыракан кадрĕсене суйласа илес тата воспитани парас ĕç çине кирлĕ пек çавăрăнса пăхмаççĕ, комсомолăн колхозсенчи организацийĕсене ӳстересшĕн тата вĕсене организацилĕх енĕпе тĕреклетессишĕн сахал тăрăшаççĕ.

Пухусемпе конференцисенче парти райкомĕсен ялхуçалăхне ертсе пырас ĕçри пысăк çитменлĕхсене палăртнă. Партин Кувакино, Чкаловски, Хĕрлĕ Чутай тата Элĕк райкомĕсем çуракине хатĕрленес ĕçе сӳрĕк ертсе пыраççĕ, колхозсенче çуркунне акма вăрлăх çителĕклĕ туписа хурас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнман, колхозсем пĕр-пĕрне вăрлăх парса пулăшассине организацилемен. Етĕрне, Улатăр тата Çĕмĕрле районĕсенче тракторсемпе ялхуçалăх машинисене япăх юсаççĕ. Йĕпреç тата Тăвай районĕсенчи колхозсенче лашасене япăх пăхаççĕ. Çав асăннă районсенчех кая юлса пыракан колхозсене мала тухма çителĕксĕр пулăшаççĕ.

Партин районсенчи пухăвĕсемпе конференцийĕсем хăйсен решенийĕсенче партин çĕнĕрен суйлана райкомĕсене хăйсен мĕнпур практикăлă ĕçĕн тĕп пикĕсне СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ ялхуçалăхне аталантармалли 1945 çулхи план çинчен йышăннă постановленине хывма хушса хăварчĕç. Кăçалхи çул ялхуçалăх ĕçĕсен пахалăхне тĕпренех ӳстермелле.

Партин районсенчи пухăвĕсемпе конференцийĕсем партиллĕ-организацийĕ тата партиллĕ-политикăллă ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме, мĕнпур парторганизацисен ĕçне кĕрешӳри пултарулăхне ӳстерме хушса хăварчĕç. Коммунистсен идейăпа политикăллă пĕлӳлĕхне ӳстерес ĕçе вăйлатмалла, партин каçхи шкулĕсен тата пуçламĕш парторганизацисем çумĕнчи политшкулсен ĕçне, пĕчĕк коммунистсемпе ĕçлессине лайăхлатмалла.

Парти райкомĕсем МТС ĕçне, кашни колхозăн пурнăçĕпе ĕçне тĕплĕн пĕлсе тăма тивĕçлĕ. Кая юлнă колхозсем çине уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхас пулать. Тракторсене юсасси, колхозсемпе МТС-сенче ĕç нормисене тултарса пырасси, ĕçе организацилемелли малтă пыракан меслетсене тата агротехникăна анлăн пурнăçа кĕртсе пырасси, кая юлнă колхозсене малтăрете тухма пулăшасси,—çаксемпе пурин-пе те райкомсен тимлĕн интересленмелле.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн нумаях пулмасть пулса иртнĕ XXI-мĕш пленумĕ партиллĕ-политикăллă тата партиллĕ-организацилле ĕçсене, ялхуçалăхне ертсе пырас ĕçе тĕпренех лайăхлатмалли майсене кăтартса пачĕ. Парти райкомĕсен хăйсен районĕсенчи колхозсемпе МТС-сене çурăкине вăхăтра хатĕрленсе çитсе, ăна ăнăçлăн иртерме пулăшас пулать. Çак ĕçре СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ ялхуçалăхне аталантармалли кăçалхи план çинчен йышăннă постановленин тĕп программа пулса тăрать. Çав постановление кашни колхозникпе тракторист тата МТС рабочийĕ патне çитермелле, вĕсене 1945 çулта ялхуçалăх умĕнче тăракан тĕп задачăна — тырпулăсен тухăçлăхне пур майсемпе те ӳстерес, тĕштирăпа ытти ялхуçалăх продукчĕсен пухса илекен пĕтĕм хисеппе ӳстерес задачăна пурнăçа кĕртме мобилизацилемелле.

Ку задачăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртес тесен, парти райкомĕсен партиллĕ-организацилĕ ĕçе лайăхлатасси çине тимлĕнрех çаврăнса пăхмалла, пуçламĕш парторганизацисене ертсе пыраççине вăйлатмалла, вĕсене организацилĕх тĕлĕшĕнчен малалла çирĕплетессишĕн тăрăшмалла. Парторганизацисем предприятисемпе колхозсен ĕçне тимлĕнрех хутшăнса пыни, партин шалти ĕçне вăйлатса пыни, парти дисциплинине çирĕплетессишĕн, коммунистсене парти ĕçне активлăнрах явăçтарассишĕн тăрăшни кирлĕ. Парти райкомĕсемпе пуçламĕш парторганизацисен колхозсенчи партиллĕ-политикăллă ĕçе пур енĕпе те лайăхлатмалла, халăх хушшинче политика ыйтăвĕсемпе партине совет тата хуçалăх организацийĕсенчи ертсе пыракан работниксен доклачĕсене тăтăшах туса иртермелле, ĕççыннисене Отечественнăй вăрçă фрончĕсенчи ларутăру çинчен, Совет Союзĕн пĕтĕм тĕнчери тата шалти лару-тăрăвĕ çинчен куллен пĕлтерсе тăмалла.

Партин районри конференцийĕсемпе пухăвĕсем пулса иртнĕренпе сахал мар вăхăт иртрĕ ĕнтĕ. Парторганизацисен хăйсен ĕçне критикленинчен унтанпа тивĕçлĕ вывод туса, пĕтĕм ĕçе тĕпренех лайăхлатма май пулнă. Анчах хăшпĕр районсенче çуракине хатĕрленес ĕç çаплипех япăх пырать-ха. Пăян-ыранах хире тухмалла, анчах партин уйрăм райкомĕсем хăшпĕр колхозсенче вăрлăх çитменнине пĕтерес тĕлĕшпе халичен те мерăсем йышăнман, колхозсенчи шалти ресурссене мобилизацилемен, МТС-сен ĕçне малтанхи пекех конкретлă мар ертсе пыраççĕ. Кувакино районĕнче пăян кунчченех кирлĕ таран вăрлăх туписа çитермен, Хĕрлĕ Чутай, Элĕк районĕсенче нумай вăрлăха акмалли кондицие лартман. Çĕмĕрлепе Улатăр МТС-ĕсем тракторсене юсаса пĕтермен.

ВКП(б) Обкомĕн XXI-мĕш пленумĕн тата партин районсенчи отчетпа суйлав пухăвĕсемпе конференцийĕсен решенийĕсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртес тесен, партиллĕ-организацилле тата партиллĕ-политикăллă ĕçе ытларах вăйлатмалла, çак никĕс çинче вара мĕнпур колхозниксене, МТС-сен работникĕсене хуçалăхпа политикăллă задачăсене пурнăçа кĕртме, фронта пулăшассине пур енĕпе те вăйлатма мобилизацилемелле.

Польша Республикин Халăх Совечĕн Президенчĕ Берут господин, Польша Республики Министрĕсен Совечĕн Председателĕ тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Э. Осубка-Моравский господин Мускава килни

Апрелĕн 19-мĕшĕнче Мускава Польша Республикин Халăх Совечĕн Президенчĕ Б. Берут господин, Польша Республикин Вăхăтлăх Правительствин Премьер-министрĕ тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Э. Осубка-Моравский господин килнĕ. Вĕсемпе пĕрле Премьер-министрăн Заместителĕ Гомолка господин, Польша Халăх Совечĕн Президиумĕн членĕ В. Ковальский господин, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕн Заместителĕ Я. Берман господин тата ытти-сем те килнĕ.

Б. Берут тата Осубка-Моравский господинсемпе пĕрле Совет Союзĕн Польшăри Посолĕ В. З. Лебедев тата Совет Союзĕн Польшăри Çар Миссийĕн Начальникĕ Г. Ф. Шатилов генерал-лейтенант килнĕ.

Белорусси вокзалĕнче Б. Берутпа Э. Осубка-Моравский господинсене тата вĕсемпе пĕрле килнĕ çынсене çаксем хирĕç тухса кĕтсе илнĕ: СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн Заместителĕ тата РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ А. Н. Косыгин, СССР Оборона Халăх Комиссарĕн Заместителĕ Н. А. Булганин, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский, Хĕрлĕ Çаран Генеральный Штабĕн Начальникĕ армин генералĕ А. И. Антонов, Ф. И. Голиков генерал-полковник, Мускав Совечĕн Председателĕ Г. М. Попов, СССР Наркоминделĕн 4-мĕш Европа Отделĕн Заведующийĕ А. А. Лавришев, Мускав хулин комендантĕ К. Р. Синилов генерал-лейтенант, А. Ф. Гундоров генерал-лейтенант, СССР Наркоминделĕн Протокол Отделĕн заведующийĕн Заместителĕ Г. И. Фомин тата ытти-сем те.

Вокзалра тата çаксем пулнă: Д. Мозелевский Посол тата вăл ертсе пыракан Польша Посольствин составĕ. Итали Посолĕ П. Кларони господин, Эфиопи Посланникĕ Л. Таэзас господин, Люксембург Посланникĕ Р. Блюм господин, Болгари Представителĕ Д. Михалчев господин, Чехословакин Ĕçри Повереннăйĕ Я. Гнизо господин, Югославин Ĕçри Повереннăйĕ Р. Николаевич господин, Исландин Ĕçри Повереннăйĕ П. Торстейнсон господин, Франци Республики Посольствин совет. никĕ П. Шарпаньте господин тата ытти-сем те пулнă.

Кĕтсе илнĕ чухне хисеплĕ хурал тăратнă тата Польшăпа Совет Союзĕн государство гимнĕсене калаç.

Вокзала Польшăпа Совет Союзĕн ялавĕсемпе илемлетнĕ.

Çав кунах Мускава Польша çарĕн главнокомандующийĕ М. Роля-Жимерский генерал-полковник килсе çитнĕ. Унпа пĕрле Польша çарĕн главнокомандующийĕн заместителĕ М. Спыхальский генерал, майор килнĕ. М. Роля-Жимерский генерал-полковника Ф. И. Голиков генерал-полковник, Н. В. Славин генерал-майор, СССР Наркоминделĕн Протокол Отделĕн Заведующийĕн Заместителĕ Г. Н. Фомин, Оборона Халăх Комиссариачĕн Тулашри сыхăну Отделĕн Начальникĕн Заместителĕ В. М. Студенов подполковник хирĕç тухса кĕтсе илнĕ.

Аэродрома Польшăпа Совет Союзĕн ялавĕсемпе илемлетнĕ.

Берут господин калани

Ĕнер, апрелĕн 19-мĕшĕнче, Польша Халăх Совечĕн Мускава килнĕ Президенчĕ Берут господин микрофон умĕнче поляк чĕлхипе çапла калать:

— Мускав хули гражданĕсем, пирĕнтĕн, поляксемпĕн, тусла çĕршыв пулса тăракан Советлă Республикăсен Союзĕн аслă гражданĕсем!

Сире, Сирĕн паттăр Хĕрлĕ Çара тата Сирĕн аслă Маршалпа çулпуçа Иосиф Виссарионович Сталина пĕтĕм поляк халăхĕ ячĕпе чун-чĕререн хĕрӳллĕ салам калатăп.

Польша халăхĕ халĕ прĕке тухнин савăнăçлă тапхăрне пурăнса иртнерет. Сирĕн Хĕрлĕ Çара пула кăна, вăл çĕнтерсе пынине пула, вăл çав тери паттăрăн кĕрешнине пула кăна поляк халăхĕ ирĕке тухрĕ. Сирĕн Хĕрлĕ Çар хăварăн çĕршывăра кăна мар, гитлеризм пусмăрланă ытти славян халăхĕсене те, вăл шутра пирĕн поляк халăхне те, ирĕке кăларчĕ. Сирĕн Хĕрлĕ Çар тăрăшнине, Сирĕн паттăр халăх тата Сирĕн аслă геннллĕ Маршал тăрăшнине çеç ирĕке тухнине Польша халăхĕ нихăçан та манас çук.

Граждансем! Эпир сирĕнпе пĕрле аслă кунсем пурăнса иртнеретпĕр. Çĕнтерӳллĕ Хĕрлĕ Çар, пирĕн Польша çарĕ тата союзниксен çарĕсем нимĕç çĕрĕ çинче çĕнтерӳллĕн малалла куçса пыраççĕ, вĕсем пĕтĕм тĕнчене, пуринчен ытла славян халăхĕсене çав тери пысăк асап кăтартнă тата сиен тунă çак вăрçа вĕçлемешкĕн çапăçаççĕ. Эпир те, Эсир те çакăн пек вăрçă урăх нихăçан та ан пултăр тесе тăрăшатпăр.

Эпир кунта Польша халăхĕн темиçе миллион çынни ячĕпе ирĕклĕхе юратакан халăхсене ĕмĕрлĕхех мир туса пама тата вăл мире ĕмĕр сыхласа тăма кирлине пĕлтерме килтĕмĕр.

Сывă пултăр аслă союз, Советлă социализмлă Республикăсен аслă Союзĕпе Польша халăхĕсем хушшинчи ĕмĕрлĕх союз!

Осубка-Моравский господин калани

Апрелĕн 19-мĕшĕнче Польша Республики Министрĕсен Совечĕн Мускава килнĕ Председателĕ Э. Осубка-Моравский господин микрофон умĕнче поляк чĕлхипе çапла калать:

«Ку хутĕнче эпир Мускавра пулнă вăхăтра паттăр Хĕрлĕ Çарпа Польша çарĕ Польша çĕрĕн юлашки татăкĕсене ирĕке кăлараççĕ, Германи ăшнелле кĕрсе пыраççĕ.

Çавăнпа та хальхи вăхăтра пирĕн тĕп задача — тăшмана çĕнтересси çеç мар (мĕншĕн тесен ăна çĕнтернĕпе пĕрех ĕнтĕ), халăхсем хушшинче аслă та çирĕп мир тăвасси пулать.

Эпĕ çапла шутлатăп: нимĕç тискер кайăкне çĕнтермешкĕн пĕрлешнĕ халăхсемпе славян халăхĕсем кирлĕ таран пĕтĕмлĕше чĕлхе тата вăй тупма пултарчĕç пулсан, Европăра ĕмĕрлĕхе пыракан тĕрĕслĕхлĕ мир туса çирĕплетес тĕлĕшпе те вĕсем пĕрлешӳллĕ çул тупма пултарĕç».

Шупашкар хулинчи советпа профсоюз тата хуçалăх активĕн пухăвĕ

Вичĕмкун Шупашкар хулинчи советпа профсоюз тата хуçалăх активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ.

1945 çулта хулана юсаса йĕркелесси çинчен хула Совет исполкомĕн председателĕ Аникин юлташ доклад турĕ. Докладчик хулана юсаса йĕркелес тĕлĕшпе Шупашкар хулинчи ĕççыннисем умĕнче тăракан задачăсем çинчен каласа пачĕ. Парксемпе садсене йĕркелемелле, çĕнĕрен 10.000 тĕп йывăç лартмалла, Ворошилов, Калинин, Кадыков ячĕпе тăракан урамсенче, Коммуналлă слободара, пурĕ 2 километр тăршшĕ çул юсамалла, чылай урамсенче йывăç тротуарсем тумалла, Атăл хĕррине илемлĕ сăн-сăпат кĕртмелле, стадиона юсамалла, шыв станцийĕ тумалла тата ытти те. Шупашкара юсаса йĕркелемелли плана çак ĕçе хула çыннисене пурне те активлăн хутшăнтарсан çеç пурнăçлама пулать. Шупашкарти кашни ĕççыннисех хăйĕн тăван хулине юсаса йĕркелес тĕлĕшпе 30—35 сехет ĕçлеме, харпăрхăй çуртĕрне, кварталне тата урамне кăтартуллăн пăхса тăма пултарать. çапла тумалла та. Чăваш республикин столицине пирĕн Автономи 25 çул тултарнă тĕле таса та типтерлĕ, пур енĕпе те йĕркеллĕ хула туса çитермелле.

Аникин юлташăн докладне тăрăх пленире 9 çын тухса калаçрĕç.

Хулари советпа профсоюз тата хуçалăх активĕн пухăвĕ, Шупашкар хулине юсаса йĕркелемелли плана хăвăртрах тата лайăхрах пурнăçлас тĕлĕшпе тумалли ĕçсене палăртса, решени йышăнчĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалне А. М. Василевские „Çĕнтерӳ" орденĕпе наградăласси çинчен

Пысăк çапăçу операцийĕсене ертсе пырас тĕлĕшпе Верховный Главнокомандовани панă заданисене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн, çавна пула фашистла нимĕç çарĕсене аркатса тăкас ĕçре питех те пысăк çитĕнӳсем тунăшăн Совет Союзĕн Маршалне Александр Михайлович Василевские «Çĕнтерӳ» орденĕ парса наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумăн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1945 çулхи апрелĕн 19-мĕшĕ.

АВАЛХИ НОВГОРОДА ЮСАНИ

Новгород хулинче строительство ĕçĕсем сарăлса кайнă. Аваллăх памятникĕсене, промышленность предприятийĕсене, пурăнмалли çуртсене юсаççĕ. Первомайски тата Московски урамсенче çĕнĕ çуртсем туса лартнă, суднăсем юсакан завода тата чылай фабрикăсене ĕçе янă. Кăçал Кремле юсамалла, çĕнĕ вокзал туса лартмалла, цемент, кирпĕч завочĕсем тата ытти заводсем те тумалла. Çапла пуçлать хăйĕн иккĕмĕш пурнăçне аваллхи Руçăн памятникĕ, наукăпа культурăн пысăк центрĕ —Новгород хули. (ТАСС).

ШЕКСПИРА ХИСЕПЛЕСЕ ИРТТЕРЕКЕН ÇИЧЧĔМЕШ КОНФЕРЕНЦИ

Пĕтĕм Российăри театр обществи (ВТО) кашни çулах Шекспира хисеплесе иртте-рекен конференци апрелĕн 23-мĕшĕнче Мускавра уçăлмалла. Ку ĕнтĕ çиччĕмĕш конференци пулать (пĕрремĕш конференци 1939 çулта пулнă). Вăл акăлчансен аслă классикĕн литература пуянлăхне тĕпчесе вĕренес тĕлĕшпе совет искусствин сыннисем ку транчĕн тунă ĕçсене пĕтĕстермелле. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

АПРЕЛĔН 19-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Юлашки виçĕ кун хушшинче пирĕн çарсем вăтаçĕрти ушкăнĕн райĕнче вăйлă разведка пынă. Çав разведкăсенче Одер шывĕпе Нейс шывĕ çинче плацдарисем тытса илес пирки çапăçусем пуçланса кайнă.

Çапла çапăçса, пирĕн çарсем ДРЕЗДЕН хули енче НЕЙС шывĕ урлă каçнă та ФОРШТ, МУСКАУ, ВЕЙСВАССЕР хулисене туртса илнĕ. Поляксен 2-мĕш армийĕн çарĕсем РОТЕНБУРГ хулине туртса илнĕ.

ОДЕР шывĕ çинче пирĕн çарсем КЮСТРИН хулинчен хĕвелтухăçнерехре плацдарм туртса илнĕ те çав плацдарма аслă латнă.

Апрелĕн 19-мĕшĕнче Чехословаки çĕрĕнче, ГОДОНИН хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата çурçĕртерехре, УКРАИНА РИ 2-мĕш фронт çарĕсем малалла тапăнса пынă, КОЗОЙИДКЕ, ЛИДЕРОВИЧЕ, ЗАРАЗИЦЕ, БЗЕНЯЦ, СКОРОНИЦЕ, СВАТОБРЖИЦЕ, НАСЕДЛОВИЦЕ ялĕсене тата ЛИДЕРОВИЦЕ, СВЕТОБОРЖИЧЕ чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ. ВЕНĂРАН çурçĕртерехре фронт çарĕсем Австри çĕрĕнче БЕРНГАРСТАЛЬ, АЛЬТ ЛИХТЕНВАРТ, ВИЛЬСЕРДОРФ, ЗИБЕНИРТЕН, АСПАРН, ЛАДАНДОРФ ялĕсене тата АЛЬТ ЛИХТЕНВАРТ, АСПАРН чугун çул станцийĕсене туртса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă тата разведчиксем шыраса çӳренĕ.

Апрелĕн 18-мĕшĕнче пирĕн çарсем нимĕçсен 96 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 115 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Чехословаки çĕрĕнче Годонин хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă. Морава шывĕн хĕвелтухăç хĕррипе малалла куçса пырса, совет часĕсем нимĕçсен оборонин вăйлă çирĕплетнĕ темиçе пунктне туртса илнĕ. Тăшмана Угерски Остров хулинчен 5 километрта ларакан Заразице ялĕнчен хăваласа кăларнă. Годонин хулинчен çурçĕртерехре нимĕçсен пехотине танкĕсем, пирĕн çарсем малалла кайнине чарма хăтланса, темиçе хут контратака тунă, анчах та гитлеровецсене кашнинчех пысăк çухатусем кӳрсе каялла хăваласа янă. Тăшман пехотин пĕр батальонне аркатса тăкнă. Çав батальонăн пĕтĕм хĕспăшалне тытса илнĕ, 200 салтакĕпе офицерне ытла тытнă, илнĕ.

Венăран çурçĕртерехре тăшман хăйĕн пуçĕркесе тăкнă çарĕсене çĕнĕ чассем парса вăйлăлатнă та хытă хирĕç тăрать. Пирĕн чассем, çав тери хăвăрт пырса çапса, нимĕçсене Альт Лихтенварт ялĕпе чугун çул станцийĕнчен сирпĕтсе кăларнă. Хĕспăшалпа çар пурлăхĕн склачĕсене тытса илнĕ. Ĕнер Мистельбах хулине туртса илнĕ çарсем тăшманăн темиçе контратакине сирсе янă, вара çурçĕр енелле 6 километр малалла кайнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 700 вилли ытла выртса юлнă. Нимĕçсен 20 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Австри çĕрĕнче, Санкт-Пельтен хулинчен хĕвелтухăçнерехре тата Граи хулинчен хĕвелтухăçнерехре, совет воинĕсем фашистла нимĕç захватчикĕсемпе хăюллăн та паттăрăн çапăçаççĕ. Гварди лейтенанчĕ Макаров ертсе пыракан стрелоксен роти вăрманпа вăрттăн пырса тăшман флангне тухнă та, çав тери хăвăрт пырса çапса, ту çинчи çула хӳтĕлесе тăракан çӳллĕ вырăна тытса илнĕ. Кĕске тытăçура совет боецĕсем 24 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен ытти салтакĕсем, хăйсен хĕспăшалĕпе радиостанцине пăрахса, тарса пĕтнĕ. Старши сержанта Ширяева, сыхăну пулăхĕ тиенĕ лава илсе пыраканскерне, нимĕçсем пеме тытăннă. Ширяев хăйне перекен тăшман пулеметне курнă та ун патне вăрттăн пуса çитнĕ, унтан, нимĕç пулеметчикĕсене автоматпа персе вĕлерсе пĕтернĕ. Гварди старши сержанчĕ Баграмян тата гварди рядовой Фокин пĕр çапăçура 30 гитлеровца пулеметпа пĕтерсе тăкнă. Умăн кĕçĕн лейтенантăн хăй тĕллĕн çӳрекен тупă расчечĕ пĕр кунта нимĕçсен икĕ танкне тата пĕр бронетранспортерне çунтарса янă. Холодцов кĕçĕн лейтенантăн хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсен батарейи хăйĕнчен чылай йышăрах тăшман вăйĕсемпе çапăçма тытăннă, нимĕçсен 4 танкне, 2 бронетранспортерне тата 2 хир туппине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн разведки Фриш-Гаф заливĕнче нимĕçсен хăй тĕллĕн çӳрекен десант баржисене тата тăшман çарĕсем ларса пынă сулăсемпе шлюпкăсене нумай курнă. Советсен бронекатерĕсем нимĕçсене атакăланă та хăвăрт çӳрекен 2 десант баржине, 2 баржăна тата 100 сулапа шлюпкăна ытла тинĕсе путарнă. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене темиçе пин çынна пĕтерсе такнă е шыва путарнă.

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн каранде-е Балтика тинĕсĕн кăнтăр пайĕнче тăшманăн 5.000 тонна таякан транспорте путарнă.

* * *

Австри хулисемпе ялĕсенчи халăх Хĕрлĕ Çара хĕпĕртесе кĕтсе илет. Эйзенштадт хулинче пурăнакан профессор Франц Элек çапла каласа парать: «Нимĕçсем çар власĕсем пирĕн хулари халăха виçĕ сехет хушшинче хуларан тухса каймă хушрĕç, анчах та хула çыннисем пуртененĕ пекех хуларан тухмарĕç. Нимĕçсемпе пĕрле бургомистр Брюнер, фашистла организацисен руководителĕсем тата нацистсен чиновникĕсем кăна тухса тарчĕç. Хулари тĕп халăх каймă шутламарĕ. Эпир Хĕрлĕ Çара кĕтсе тăтăмăр, мĕншĕн тесен эпир Хĕрлĕ Çар пирĕ гитлеровецсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларассине пĕлсе тăнă. 1938 çулта Австри çĕрне нимĕçсем йышăннă хыççăн фашистсем Эйзенштадт хулинче 400 çынна ытла тытса хупрĕç. Вĕсенчен нумайĕшĕ гестапо тĕрмисенче пĕтрĕç». Рабочи Георг Бабдис çапла каласа панă: «Эпĕ ĕнтĕ 58 çулта. Нацистсем мана фольксштурм çарне кĕме хушрĕç, анчах эпĕ килĕшмерĕм. Вара вĕсем мана çавăнпăн тĕрмене хупса лартрĕç. Çавна кура ватă стариксем те нумайĕшĕ фольксштурм çарне ирĕксĕрех кĕчĕç. Анчах та Хĕрлĕ Çар пирĕн хула патне çыхăрма пуçласанах, кĕсем пурте хăйсен киленĕсене тарса пĕтрĕç».

Лоймерсдорф ялĕнчи священник Шранц çапла каласа кăтартнă: «Эпĕ Австри валли Мускавпа Лондонран паракан радиосăмахсене час-часах итлеттĕм. Манпа пĕрле çав радиона тата хăннăпĕр прихожансем те итлетчĕç. Эпир Хĕрлĕ Çар пилесшинчен пĕрре те хăраман гитлеровецсен пропагандине ĕненмен. Пирĕн ялти халăх Хĕрлĕ Çар Австрие ирĕке кăларса ют çĕршывсене паханмасăр пурăнмалла туса парасса пĕлсе тăнă».

Парти пурнăçĕ

Октябрьски районра кадрсемпе мĕнле ĕçлеççĕ

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче кадрсемпе ĕçлесси чи ответлă ĕçсенчен пĕри пулса тăрать. Партипе совет организацийĕсем, колхозсемпе предприятисем, учрежденисем тата пĕтĕм халăх хуçалăх умĕнче тăракан задачăсене пурне те кадрсем татса параççĕ.

ВКП(б) Октябрьски райкомĕ кадрсене воспитани парса ӳстерес ĕçе чылай лайăхлатрĕ. Кадрсен пĕлĕвне ӳстерес тата вĕсене ĕçре пулăшас майпа ВКП(б) райкомĕ çак çул 4 хутчен канашлу ирттерчĕ. Сав канашлусенче, ялхуçалăх уставне пĕрепнисĕр пуçне, выльăх-чĕрлĕх пахакансен, пахча-симĕс партса тăнакансен тата хăмла ĕрчетекенсен ĕçĕсене лайăхлатмалли майсене кăтартса панă. Çакăнпа пĕрлех райком работникĕсен вăйĕпе 8 хутчен тĕрлĕ темăсемпе докладсем туса ирттернĕ.

Массăллă курссем урлă колхоз кадрĕсене 457 сыпăна вĕрентсе кăларнă. Вăл шутра: уйăхпи ĕçĕн бригадирĕсем — 84 çын, дояркасемпе свинаркăсем—50 çын, ветеринари санитарĕсем—25 çын, аслă конюхсем—39 çын вĕренсе тухнă. Колхоз председателĕсен республикăри курсĕнчен 26 çын вĕренсе тухнă. МТС валли кадрсем çитĕлĕклĕ хатĕрлес шутпа, Канашрн механизаци шкулĕнче 10 специалист вĕрентсе кăларнă. Кунсăр пуçне районри трактористсен курсĕнчен 23 çын вĕренсе тухнă. Халĕ районра чăх-чĕп, хур-кăвакал пахакансен курсĕ уçăлчĕ. Унта 38 çын вĕренет. Занятисене райĕрĕç пайĕн специалисчĕсем ирттереççĕ.

Лайăх ĕçлекен работниксене пысăкрах ĕçе куçарса пырса, вĕсен ĕçри пултарулăхне ӳстерме пулăшаççĕ. ВКП(б) райкомĕн кадрсен енĕпе ĕçлекен секретарĕ Д. Тимофеев юлташ, кадрсене пĕлсе суйласа илсе, вĕсене ĕçе тĕрĕс вырнаçтарса тухассинпе тăрăшать. Кунпа пĕрлех çамрăк кадрсене ĕçре тăтăшах пулăшса, вĕрентсе пырать. Кăçал пурĕ 19 çынна пысăкрах ĕçе куçарса лартнă.

Чĕнерти Тимошенко ячĕпе тăракан колхоз районра юлса пыракан колхозсенчен пĕри пулнă. Çакă вара колхоз руководителĕнчи килнĕ. Кунти ĕçе çирĕплетме парти райкомĕ пулăшнă. Колхоз председательне уланăтарнă. Çапла иртнĕ çулта çĕнĕ председатель, вăрçă инвалидĕ П. Васильев юлташ ертсе пынине, колхоз вăйлă тырпул туса илнĕ. Колхозниксене ĕçкунĕ пуçне 3,1-шер килограмм тырă, 2,5-шер килограмм çĕрулми валеçсе панă. Кун хыççăн, паллах, колхозниксен ĕçлес шухăш-кăмăлĕ татах ӳснĕ. Колхоз вăйланнăçемĕн вăйланса пынă. Халĕ çак колхоз районра чи хисеплисенчен пĕри шутланса тăрать.

Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн специалисчĕсем те лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Акă, «Красное Сормово» колхозри выльăхсене пахакан Х. Кольпова юлташ 13 ĕнерен 13 пăру кĕтсе илсе пурне те тĕрĕс-тĕкĕл пăхса ӳстернĕ. Аслă Каркури «Вулкан» колхозăн аслă конюхĕ Е. Осипова юлташ 3 çул хушшинче 5 кĕсеренпе 13 тиха ӳстернĕ. «Волга» колхозăн сысна пахаканĕ А. Мельникова юлташ кашни сысна аминчен 15—16-шар сысна çури илсе ӳстернĕ. Кун пек тĕслĕхсем районра сахал мар.

Çапла ĕнтĕ, ертсе пырас ĕçе çирĕп кадрсем лартни, кадрсене ĕçре пулăшса пыни мĕнпур ĕçе лайăхлатма пулăшать.

Н. АНДРЕЕВ.
(«Чăваш Коммуни» корр.).

Малта пыракан колхозри лаша ферми

Лашасен шутне ӳстересси, чăн малтанах, чуптару кампанине лайăх ирттерсе, башни кĕсререн тиха илсе ситĕнтернинчен килет. Ку тĕлĕшпе лайăх ĕçлекен колхозсен тата конюхсен ĕçри опытне пур майсемпе те сарса пынă кирлĕ.

Лашасем ĕрчетес ĕçре Çĕрпӳ районĕнчи «Новая жизнь» колхозран нумай вĕренме пулать. Çак колхозра вырăссемпе американецсен рысакĕсене ĕрчетеççĕ. Лаша фермине кунта 1933 çулта организацилеме. Ферма заведующийĕ пулса ăна организацилекен Г. Ф. Карышев юлташ ĕçлет. Фермăра пурĕ 5 конюх. Карышев юлташ 1940 çулта Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕ пулнă. Çак ĕçре лайăх ĕçленĕшĕн ăна Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ пĕрре 100 тенкĕ, тепре 150 тенкĕ, виççĕмĕш хутĕнче 500 тенкĕ укçа парса премиленĕ. Унсăр пуçне 1943 çулта Карышев юлташа СССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ «Отличник социалистического сельского хозяйства» значокпа наградăланă.

1942 çулта ферма 21 кĕсререн 19 тиха, 1943 çулта 18 тиха илсе, пăхса çитĕнтернĕ. Иртнĕ çул колхозăн лашасем валли çителĕклĕ апат пулман, çапах та 15 тиха илсе çитĕнтернĕ. 1945 çулта чуптарнă 23 кĕсререн 22 кĕсри пĕтĕ.

Карышев юлташ хăйĕн ĕçне юратать тата хăй таврă ытти колхозниксене явăçтарма пултарать. Ананий Романов конюхах илер. Вăл çак ĕçре 12 çул ĕçлет. 1941 çултан пуçласа кăна вăл колхоза 95 тиха çитĕнтерсе панă. 1944 çулта Романов юлташа Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ 500 тенкĕ укçа тата Хисеплĕ грамота парса наградăланă. Конюх Наталия Карышева виçĕ çул ĕçлет. Иртнĕ çул вăл хăй сумне çирĕплетнĕ 9 кĕсререн 7 тиха илсе çитĕнтернĕ. Конюх Валентина Карышева 4 çул ĕçлет. Хăй сумне çирĕплетнĕ кĕсресене лайăх пăхать, вĕсем мăнтăр та вăйлă, пурте пĕтĕ. Хăм пăрахнă тĕслĕхсем пулман. Галина Сторублева юлташ конюх пулса вилсĕ çул ĕçлет. Вăл пăхакан 7 кĕсре те пĕтĕ, лайăх ӳт-пӳллĕ. Кĕсресене фермăра лайăх апатлантараççĕ, тасатса тăраççĕ.

Лаша фермин заведующийĕ Карышев юлташ ăйăрсене суйласа илме пĕлет. Колхозра 3 ăйăр, вĕсем пурте рысаксем. Конюхсем ăйăрсене лайăх пăхаççĕ, çавăнпа та вĕсем мăнтăр. Кĕсресене тата ăйăрсене тĕрĕс тата лайăх пăхнине пула, колхозра хĕсĕр кĕсресем çук. Сăмахран, «Ливная» ятлă кĕсререн 8 çул хушшинче 8 тиха илнĕ. Çавăн пекех «Потеря» ятлă кĕсререн те 8 тиха илсе çитĕнтернĕ. «Утеха», «Вятка» ятлă кĕсресем те кашни çулах хăмлаççĕ.

Витере таса, типĕ тата сутă. Лашасене кашни кунах хăрчăкласа тасатаççĕ. Хăрчăксем, щеткăсем витере çителĕклĕ.

Лашасене кунне 3 хутчен, яланах пĕр вăхăтра ситереççĕ. Уйрăмăнах пĕтĕ кĕсресене лайăх пăхаççĕ, вĕсене лайăх утăпа, сĕлĕпе тăрантараççĕ, вăхăтра шăвараççĕ. Тихасене амăшĕнчен 6—7 уйăхран уйăраççĕ. Çак вăхăт тĕлне вĕсене утă, сĕлĕ тата ытти апатсем çиме вĕрентеççĕ. Тихасене талăкра 1 килограмм сĕлĕ, 3—4 килограмм утă параççĕ. Амăшĕнчен уйăрнă хыççăн тихасене паракан апат шутне ӳстерсех пыраççĕ. 6—7 килограмм утă, 2 килограмм сĕлĕ параççĕ. Тихасем çулталăка çитиччен вĕсене кунне 4 хутчен çитереççĕ.

Чуптару кампанийĕ «Новая жизнь» колхозра яланах февраль уйăхĕнче пуçланать. Çуркуннехи хĕрӳ ĕçсем пуçланиччен тихасем ӳссе тĕрекленеççĕ. кĕсресем те çурхи ĕçсем тĕлне вăйлăланаççĕ. «Новая жизнь» колхоз Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ хушнă тăрăх 1943 çулта ытти колхозсене ăратлă 8 ăйăр сутнă. 1944 çулта та ăратлă пахи ăйăрсем 9 сутнă.

«Новая жизнь» колхозăн лаша ферми ытти нумай колхозсемшĕн кăтартулла пулса тăрать.

С. КАРПОВ,
Ялхуçалăх наукисен кандидачĕ.

Колхозниксем ăмăртăва тухрĕç

Кăçал, 1945 çулта, эпир ĕçкунĕ пуçне 4 килограмм тĕштырă туса илес тесе кĕрешетпĕр.

Иртнĕ çул ыраш акмалли хирсене 3 пин лава яхăн тислĕк кăларнă. Ырашъ пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех машинăпа тата вăхăтра акса хăварнă. Калчасем юр айĕнчен калама çук аван тухрĕç.

Кăçалхи çуракине ăнăçлăн ирттерес тесе те сахал ĕç туман: машинăсем хатĕр, вăрлăхсем çитессĕ, çураки вăхăтĕнче 14 вăкăрпа ĕне ĕçлемелле, лашасемпе ĕне. вăкăрсем валли çителĕклĕ таран апат хăварнă. Ĕç вăхăтĕнче лашасене утăлăмсăр пуçне 3 килограмм тырă, 4 килограмм пĕçернĕ çĕрулми çитерме шутлатпăр.

Кăçал ялхуçалăх ĕçĕсене çирĕп агроплан тăрăх туса пыратпăр. Кашни бригада, кашни звено валли уйрăм агроплан туса хатĕрленĕ. Сухаçăсем, звеносенче ĕçлекенсем çак плансемпе тĕплĕн паллашнă, вĕсене пурнăçа кĕртессишĕн бригадăпа бригада, звенопа звено, сухаçăпа сухаçă социализмлă ăмăртăва тухнă, татăклă обязательствăсем илсе алă пуснă.

Лашасене тата çуракинче ĕçлемелли ĕне-вăкăрсене акана лайăх ӳт-пӳпе калăрас тесе, вĕсене комсомолецсем шефа илнĕ.

Çуракинче акмалли çĕр лаптăкĕ иртнĕ çулхинчен 30 гектар ытларах. Çапах та эпир çураки ĕçне пĕлтĕрхинчен 10 кун иртерех пĕтересшĕн. Çав вăхăтрах ĕç пахалăхне те манса хăвармастпăр. Кăçал хĕл каçинченех агрокружок ĕçлерĕ. Пурĕ 16 занати пулса иртнĕ, занятисене ыланах 30—35 çын çӳрерĕç. Ака-сухара ĕçлекенсем хăйсен ĕçне лайăх пĕлеççĕ. Унсăр пуçне агротехника ыйтăвĕсене колхоз пухăвĕсенче, правлени заседăвĕсенче, комсомолецсен пухăвĕсенче сӳтсе-явнă.

Çĕрулми калчине лартса çĕрулми туса илес тĕлĕшпе ĕçлеме уйрăм звено тунă. Калча шатарса ӳстерме çĕрулмине ешĕксене лартнă та ĕнтĕ.

Пирĕн колхозра звенопа ĕçлесси кăçал çеç пуçланать. Малтанлăха 5 звено организацилерĕмĕр.

Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем хăйсен вăйĕ çине çирĕп шанаççĕ. Кашни гектартан 100 пăтран кая мар тĕштырă туса илесси пирки иккĕленместпĕр.

П. ИГНАТЬЕВ.
Первомайски районри Киров ячĕпе тăракан колхоз председателĕ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, апрелĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедицилле вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре калана тăрăх, Рур «миххинче» ташман хирĕç тăрса кĕрешесси пĕтĕмпех пĕтсе ларнă. Союзниксен çарĕсем ташманăн çав районри пĕрпĕринчен уйăрăлса кайнă отрячĕсене пĕтерсе тăкнă.

Голландипе Германи чиккинче, Эмс шывĕнчен хĕвеланăçнерехре, немĕçсем лайăлăн хирĕç тăрса çапăçаççĕ.

Аллер шывĕн тепĕр енче союзниксем малалла куçнă, Верден тата Зольтау хулисене тытса илнĕ, халĕ, Шневердинтен хулинчен 16 километр çурçĕртерехре тăраççĕ. Ильпен хулине хупăрласа илсе тăшмантан пĕтĕмĕш тасатнă темелле.

Пĕлтерӳре союзниксен патрудĕсем Чехословаки чикки урлă каçса Готмансгрюнпа Гатине çитнине çирĕплетсе панă. Нюрнберга немĕçсем хирĕç тăрасси вăйсăрланнă.

ЛОНДОН, апрелĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс тавралăхĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла калана: Италире 5-мĕш армин чаçĕсем Рено шывĕн улăхне хӳтĕлесе тăракан Монте-Кастеллино ятлă çӳллĕ вырăна пыçăннă. Болонья хулинчен кантартарахра союзниксен çарĕсем, ташман хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, малалла куçнă. 8-мĕш армин чаçĕсем Комаккьо кӳллинчен хĕвеланăçнерехре малалла куçса пынă. Аржента хулине пĕтĕмĕшпех ирĕке кăларнă.

АМЕРИКАНЕЦСЕМ РЕЙХСБАНКАН МАГДЕБУРГРИ УЙРĂМНЕ ТЫТСА ИЛНĔ

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, американецсен 9-мĕш армийĕн чаçĕсем Германи Рейхсбанкĕн Магдебургри уйрăмне тытса илнĕ. Унта 70 миллион доллар кĕмĕл рейхсмаркăсем пулнă.

НИМĔÇСЕМ ГОЛЛАНДИЕ ШЫВА ПУТАРАÇÇĔ

ЛОНДОН, апрелĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС) Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 18-мĕшĕнче нимĕçсем Голландире Хук-Ван-Холланд районне шыва путарма тытăннă. Вĕсем пĕвере 300 метр пысăкăш мăтăк тунă та, Зибер-Зей шывĕ вара гинĕсрен аялах выртакан лайăх çĕр çине кĕрлесе юхса кайнă. Тинĕс шывĕ кăнтăр енелле, Амстердам хули енелле юхса пырать. Анчах та нимĕçсем пĕвесене урăх мăтармасан, Амстердам шыва путмалла мар, шыв вăл хулана çитиччен 16 километрта чарăнмалла. Хук-Ван-Холландăн хĕвеланăç хĕрринчи ансăр пайĕ кăна шыва путмалла мар.

Югославири çапăçусем

БЕЛГРАД, апрелĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави çарĕн генеральнăй штабĕ ирттерес пĕлтерӳре çапла калана: Славонире Югослави çарĕсем пĕтĕм фронт тăлăкăшĕпех наступлени туса пыраççĕ. Хаяр çапăçусем пулса иртнĕ хыççăн Джаково хулине тата халăх пурăнакан ытти чылай пунктсене ирĕке кăларнă. Долни Михолапран хĕвеланăçнерехре хаяр çапăçусем пыраççĕ. Джаково участокĕнче кăна ташманăн 1.320 çын вилнĕ, 173 çынни тыткăна лекнĕ.

Босна шывĕн улăхĕнче хаярăн çапăçнă хыççăн Югослави çарĕсем Маглай тата Добой хулисене ирĕке кăларнă та тăшмана Брод еннелле хăваласа пыраççĕ. Тăшман çынсем тĕлĕппе те, техника тĕлĕппе те пысăк сухатусем тӳсет.

Хорватин тинĕс хĕрринчи айĕнче Югослави çарĕсем, тăшман хирĕç тăннине çĕнтерсе, Нови хулине йышăннă. Тăшмана Сельц еннелле хăваласа пыраççĕ.

Словенире хаяр çапăçусем пыраççĕ.

ЮНГРЕСС ЧЛЕНĔ КИНГ СĔННИПЕ СТЕТТИНИУС КИЛĔШЕТ

ВАШИНГТОН, апрелĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Представительсен палатин членĕ Кинг демократ (Калифорни штатĕнчи) сĕннине ответлесе, государство секретарĕ Стеттиниус сыру пичетлесе кăларнă. Сав сырура вăл нейтральнăй е ытти çĕршывсене тухса тарма хăтланнă е тухса тарнă çар преступникĕсене вăйпа е ытти майпа тытса илес ĕçре США ытти паписемпе пĕрлештĕр тесе Кинг сĕннĕ резолюцине килĕшнĕ, çар преступникĕсене тытса памалли тата вĕсен пурлăхĕсене туртса илмелли договорсем пур пулин те, çак ĕçе тумаллах, тенĕ.

Апрелĕн 13-мĕшĕнче Стеттиниус хăйĕн Кинг патне сырнă сыравĕнче çапла калана: Кинг сĕннĕ резолюцин принципĕсем государство департаменчĕн ку тараннчен пĕлтернĕ шухăшĕсемпе пĕр пекех, тенĕ.

Кинг тунă сĕнӳре калана тăрăх, «Конгресс çапла шутлать: кирек мĕнле государствăн пуçлăхĕ е официальнăй представителĕ е тата промышленникĕ, гражданла çын пулса тăрса, хăй тунă ĕçсем государство ĕçĕсем пулнă тесе е тата çӳлтен приказ парса ирĕксĕрлесе тутарнă ĕçсем пулнă тесе, судран е наказани парасран пăрăнма пултараймасть».

ТРЕСТСЕН СИЕНЛĔ ĔÇĔСЕМ ПИРКИ ФРАНЦИРИ ПĔТЕМĔШЛЕ ĔÇ КОНФЕДЕРАЦИЙĔ ЙЫШĂННА РЕЗОЛЮЦИ

ПАРИЖ, апрелĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Пĕтĕмĕшле ĕç конфедерацийĕн (ВКТ) администрацин комиссийĕ Франци тресчĕсен сиенлĕ ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларакан резолюцин йышăннă.

Çăкăр хакĕ ӳснĕ вăхăтра, пур хаксем те ӳсессинне, ĕç укçине питĕ нумай чакарассине кĕтсе тăнă вăхăтра,—тенĕ резолюцире,—трестсен француз юнне тăкса илнĕ тупăшĕсем чакман. Ку çеç те мар, трестсем финанс ĕçĕсенче туса иртерекен хăйсеммĕн усăллă мерăсемпе усă кураççĕ, сăмахран, национализацилеме предприятисеммĕн миллионнăр франк укçа илеççĕ.

Администрацин комиссийĕ çакна палăртать: трестсем, 1936 çулхи пекех, çĕршыва икке уйăрса ярастăн, рабочисемпе хресченсене хирĕçтересшĕн, суйласем умĕн политикăллă йĕркесĕрлĕх туса хурастăн. Çакна пула ВКТ сутăнчăксен пурлăхне халех конфискацилеме, кредит ĕçне тата монополисене национализацилеме ыйтать, тăшмана хирĕç кĕрешекен халăх совечĕн программи тавра мĕнпур французсене пĕтĕçтерме чĕнет.

РУМЫНИН ХАЛĂХ ТРИБУНАЛĔ ОДЕССА ТАТА ЯССЫ ХУЛИСЕНЧЕ ТУНĂ ТИСКЕР ĔÇСЕНЕ ТĔПЧЕСЕ ПĔЛНИ ÇИНЧЕН

БУХАРЕСТ, апрелĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Бухарестри радио пĕлтернĕ тăрăх, халăх трибуналĕ Одессăра тунă тискер ĕçсене тата 1941 çулхи июнĕн 29-мĕшĕнче Яссы хулинче тунă тискер ĕçсене тĕпчесе пĕлни çинчен

ЧЕХОСЛОВАКИ ÇАРĔНЧИ УЛШĂНУСЕМ

КОШИЦЕ, апрелĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословаки республикин президенчĕ дивизи генералне Сергей Ингра хĕçпăшаллă вăйсен главнокомандующийĕ вырăнĕнчен кăларнă та вăл вырăна бригада генералне Людвиг Свободана лартнă. Республика президенчĕн декречĕ тăрăх, Богуш Мирослав генерала хĕçпăшаллă вăйсен главнокомандующийĕн штабĕн начальникĕ ĕçĕнчен хăтарнă. Халĕ çав ĕçе Богумил Бочек генерала лартнă.

Республика президенчĕ çаван пекех тата хĕçпăшаллă вăйсен главнокомандующийĕн штаб начальникĕн заместителĕ пулса ĕçлессинчен бригада генералне Франтишек Моравеца хăтарнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ХОРВАТИ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ТУСА ХУНА

БЕЛГРАД, апрелĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Апрелĕн 14-мĕшĕнче Сплит хулинче Хорвати халăхĕн Земальри пĕрлĕх Вечин президиумĕ черетсĕр лару туса ирттернĕ. Çав ларура федерацилле Югославине кĕрекен Хорватин правительствине туса хунă.

Çĕнĕрен туса хунă правительствăн премьер-министрĕ—Раде Вине Ёкрстулович.

ИРАН ПРАВИТЕЛЬСТВИ ВЫРĂНТАН ТУХНА

ТЕГЕРАН, апрелĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Апрелĕн 17-мĕшĕнче меджлис ларăвĕ хыççăн премьер-министр Баят вырăнтан тухасси çинчен шаха заявленив панă. Çакăн хыççăн шах патне меджлис председательне Табарабине чĕнтернĕ. Шах ăна премьер-министр пулма кама лартасси çинчен меджлис шухăшне калама ыйтнă.

ЧУПТАРУ ПЛАННЕ ХАТĔРЛЕСЕ ÇИТЕРЧĔÇ

КАНАШ. «Новая жизнь» колхоз кăçал çуракине иртнĕ çулхинчен нумай лайăх хатĕрленчĕ. Вăрлăхсем çителĕклĕ. вĕсем таса тата кондицине лараççĕ. Машинăсем пурте юсавлă, лашасем те лайăх. Çак кунсенче колхоз правленийĕ çураки планне тепĕр хут пăхса тухрĕ. Çуракине 8 ĕç кунĕнче ирттерме йышăнчĕç.

И. МАКСИМОВ.

Клевер анатпăр

ÇĔРПӲ, апрелĕн 20-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри чылай колхозсем клевер акаççĕ. Паянхи кун тĕлне 125 гектар акнă. Клевер акмалли планăн 10 процента яхăн кăна тултарнă-ха. Клевер вăрлăхĕ районра çителĕклĕ. Çанталăк лайăх тăни клевер акмалли планăн çак кунсенчех тултарма май парать.

«Ĕмĕт», «Балтиец» тата «Красная Армия» колхозсем кĕрхи тырăсене апатлантарма тытăнчĕç.

Г. ЧУМЕЙКИН.
Çĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Ӳкерчĕк çинче: Сĕнтĕр районĕнчи Кăпасри «КИМ» колхозăн председателĕ И. Г. Савельев юлташ. Вăл Отечественнăй аслă вăрçăн участникĕ. Фронтра тăшмана хирĕç паттăрлăн кĕрешнĕшĕн Савельев юлташа «За отвагу» медаль парса наградăланă.

Савельев юлташ ертсе пыракан «КИМ» колхоз çуракине мĕнле хатĕрленни çинчен юнашарти статьяна вулăр.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Кĕпере хăçан юсăç-ши?

ЧУРАЧĂК. Малти Анташăпа кĕпер юсама 1941 çултанпах хатĕрленеççĕ. Анчах кăçалхи çула çитсе те кĕпер çĕмĕрккишех ларать-ха. Ял Совет председателĕ Н. Иванова юлташ кĕпер юсама тесе государствăран 3000 тенкĕ укçа илнĕ. Укçине вара Н. Иванова кĕпер юсанă çĕре мар, хăйне тумланма салатса янă. 1945 çулта ял Совечĕ валли вутă хатĕрлемен пирки, кĕпер юсама хатĕрленĕ йышăça вутă вырăнне хутма тытăннă.

Çапла хăтланса пырсан, кĕпере хăçан юсаса лартăç-ши?

Г. ЕФИМОВ.

„КИМ“ колхоз çуракине хатĕр

«КИМ» колхоз çулран çулах пысăк тухăçлă тырпул туса илет. Иртнĕ çулта çак колхоз гектартан вăтам шутпа 13 центнер ытла сĕлĕ илнĕ, ытти тĕштырăсен тухăçĕ те пысăк пулнă.

Колхозниксемпе колхозницăсем Чăваш республики 25 çул тултарнă ятпа пуçланнă социализмлă ăмăртăва хутшăнма йышăннă. Вăйлă тырпулшăн кĕрешмĕ «Кубас» колхоза ăмăртăва чĕннĕ. «КИМ» колхоз çуракине пур енчен те лайăх хатĕрленсе çитнĕ. Çуракинче 105 гектар акмалла. Вăрлăха пĕтĕмпех лайăх тасатса хунă. Кӳршĕри колхозсене пулăшма Заготзерно складне 162 пăт вăрлăх леçсе панă.

Колхоз тимĕрçи Е. Кузнецов юсанă 15 плуга, сеялкăсене çĕнĕрен тĕрĕсленĕ.

Кăçал хĕлле кăна хире 1.600 лав тислĕк кăларнă. Кĕрхи тырă калчисене апатлантарма 30 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 40 центнер кĕл. 20 центнер фекали хатĕрленĕ.

«КИМ» колхозра халĕ пикенсех клевер акаççĕ тата кĕрхи тырă калчисене апатлантарма хатĕрленеççĕ.

М. ИСАЕВ.
(Хамăр корр.).

Етĕрне районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз çуракине лайăх хатĕрленнĕ. Вăрлăхсем таса та ытлашшипех пур. Лашасем вăйлă та самăр. Ялхуçалăх машинисем юсавлă, ут таврашĕсем тата транспорт инвентарĕ çителĕклĕ.

Ӳнерчĕк çинче: Молотов ячĕпе тăракан колхозăн председателĕ Ф. С. Рошканова юлташ.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Комсомолăн районри конференцийĕ

ÇĔМĔРЛЕ. Çак кунсенче кунта комсомолăн районри VI-мĕш конференцийĕ пуçласа иртрĕ. Комсомол райкомĕн ĕçĕсем çинчен Васильева юлташ отчетлă доклад туса пачĕ.

Комсомолăн районри организацийĕ çамрăксен вăйне Тăван çĕршыва, фронта пулăшма мобилизацилес тĕлĕшпе сахал мар ĕçленĕ. Отчетлă тапхăрта комсомол ретне 1614 çамрăк хутшăнна. 147 комсомолец большевиксен парти ретне кĕме тивĕçлĕ пулнă.

Пуçламĕш организацисенчен уйрăмах комбинат çумĕнчи организаци лайăх ĕçленине палăртмалла. Завод Пĕтĕм Союзри социализмла ăмăртура 12 уйăх хушши ситĕ иккĕмĕш тата виççĕмĕш вырăнсене йышăнса тăрать. Çак тĕлĕшпе заводри комсомол организацин те сахал мар ĕçленĕ. Комсомолецсемпе çамрăксен бригадисем, хăйсен нормине уйăхран-уйăха пытлашшипех тултарса пырса, 11 уйăх хушши ĕнтĕ ВЛКСМ Обкомĕн кӳçса сӳрекен Хĕрлĕ Ялавне хăпартлăнче тытса тăраççĕ. Заводра 25 комсомолеца чи лайăх ĕçлевсесен шутне 16 комсомолеца завоçăн Хисеп хăми çине кĕртнĕ.

Комсомолецсем ялхуçалăх ĕçĕсене те хастарлăн хутшăнаççĕ. Вĕсем вăйлă тырпулшăн, йышлă выльăх-чĕрлĕхшĕн кĕрешнĕç ĕçре колхоз çамрăкĕсене хастарлăн ертсе пыраççĕ, хăйсем лайăх пример кăтартаççĕ. Районра конюхсем пулса—17 комсомолец, дояркăсем—5, свинаркăсем—7, пăру пăхакансем—9, уйăхпи бригадисен бригадирĕсем—5, колхоз счетовочĕсем—4, ял Совет председателĕсем пулса пĕр комсомолец ĕçлеççĕ.

Кăçал вăйлă тырпул туса илме хатĕрленсе, районри комсомолецсем колхоз çамрăкĕсемпе пĕрле уя 35.288 лав тислĕк кăларнă, 358 плуг, 31 сеялка, 456 комплект ут таврашĕсем, 312 урапа юсанă. «Комбинат» колхозри комсомолецсем кăна уя 2.300 лав тислĕк кăларнă, 88 центнер кĕл, 65 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă, 22 плуг, 25 сӳре, 3 сеялка юсаса хатĕрленĕ.

Конференци комсомол райкомĕн ĕçĕнчи ситменлĕхсене те нумай кăтартса хăварчĕ. Чи пысăк ситменлĕхсенчен пĕри вăл — комсомол ĕçĕнче комсомол демократине пăсни колхоз çамрăкĕсене комсомола сӳреккĕн явăçтарни пулать. Комсомолăн 18 пуçламĕш организацинче 1944 çулта тата 1945 çулăн пĕрремĕш кварталĕнче пĕр çамрăка та комсомола явăçтарман, виçĕ организаци саланса кайнă. 25 организацире 3—4-шар комсомолец çеç шутланса тăраççĕ. Иртнĕ çулта кĕнĕ 47 комсомолеца пăлан кунччен те комсомол билечĕсем паман. Комсомолăн Уполномкомзаг, Поликлиника, Комбинат çумĕнчи тата Тукасри, Молгачкинăри, Тăванри организацийĕсенче иртнĕ çулта пĕтĕмпе те 1—2 хутчен çеç пухусем пулса иртнĕ. Комсомолăн Çĕнкасри, Вăрман склачĕ çумĕнчи организацийĕсенче пĕр пуху та ирттермен. Çаван пекех ВЛКСМ райкомĕн пленумĕсемпе комсомол активĕн пухăвĕсем те йĕркелĕ иртмеççĕ.

Комсомолецсемпе çамрăксем хушшинче политикăлла-массăллă ĕçе тивĕçлĕ вырăна лартман. ВЛКСМ Центральный Комитечен XIII-мĕш пленумĕн решенийĕсене пур пуçламĕш организацисенче те мар сӳтсе-явнă. Нумай организацисенче ВКП(б) историйĕн Кĕске курсне тата Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине вĕрениве кружоксем, политшкулсем организацилемен. Хăшпĕр кружоксем руководитель çук пирки саланса кайнă. Комсомол райкомĕ çумĕнчи докладчиксен группи ĕçлемест. Государство тата ĕç дисциплинине пăсакансене хирĕç комсомол организацийĕсем çителĕксĕр кĕрешеççĕ. 1944 çулта ĕç дисциплинине. совет законĕсене пăснăшăн чылай комсомолеца судпа айăпланă.

Районра шкул ачисенчен пурĕ те 130 комсомолец сес. Çичĕ çул вĕренмелли 6 шкулта комсомол организацийĕсем çук. Шкулсенчи комсомол организацийĕсене çирĕплетес тата ӳстерес тĕлĕшпе ВЛКСМ райкомĕ çителĕксĕр ĕçленĕ. Нумай комсомолецсемпе пионерсем вĕренӳре хăйсем кайра пыраççĕ, дисциплинăна пăсаççĕ.

Конференцире отчетлă доклад тăрăх 19 делегат тухса каласрĕç. Вĕсем, ВЛКСМ райкомĕн ĕçĕнчи нумай çитменлĕхсене палăртса, çав çитменлĕхсене пĕтермелли майсене кăтартса пачĕç. Конференци комсомол райкомĕн ĕçĕсене тĕнченех çĕнетсе лайăхлатас майпа анлă решени йышăнса хăварчĕ. ВЛКСМ райкомĕн çĕнĕ составне 31 çынтан суйларĕ. Комсомол райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулса ĕçлеме Лукичева, иккĕмĕш секретарĕ пулса ĕçлеме Архипова юлташсене суйланă.

Конференцире ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн çарĕç енĕпе ĕçлекен секретарĕ Г. Петрухин юлташ пулчĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ. г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—97, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00322

Типография № 1 Управления полиграфпромышленности ... Заказ № 2. 16.000